**Константин Ивановӑн каласӑра ҫамрӑк ӑрӑва вӗрентсе калани**
**статья**
**для использования на уроках родного чувашского языка и литературы**

Ӑслӑ ҫынсем каланӑ сӑмахсене пухса усӑ курасси сӗм авалтанах йӑлана кӗнӗ. Акӑ историнче авалхи греци хӑш-пӗр философӗсем каланисене итлесе тӑнӑ ҫынсем каласа хӑварни паллӑ. К. Ивановӑн пултарулӑхӗнче те ҫавӑн пек пуянлӑх сахал мар иккен. Вӗсене халиччен ятарласа шута илмен. «Нарспи» авторӗ каласӑра каланӑ шухӑшсем тӗрлӗ ҫынсен аса илӗвӗсенче упранса юлнӑ. Ҫав аса илъсем «Контсантин Иванова аса илеҫҫӗ» кӗнекере (1990ҫ.) туллинрех пичетленнӗ.

Пирӗн мухтавлӑ сӑмах ӑсти каланӑ шухӑшсем тематика тӗлӗшӗнчен чылай пуян. Вӗсем поэтӑн тавра-курӑмне, кулленхи пурнӑҫне, шухӑш-ӗмӗтне тӗплӗнрех пӗлме пулӑшаҫҫӗ. Уйрӑмах поэт тӗнче литературин, культурин тата ӑслӑлӑхӗн пуянлӑхӗ ҫине таянса ӗҫлеме йыхӑрни хаклӑ.

Ҫавӑнпа та тематика тӗлӗшӗнчен ҫак шухӑшсене темиҫе ушкӑна пайлама пулать. Ачах та эпир кунта Константин Ивановӑн каласӑра ҫамрӑк ӑрӑва вӗрентсе каланине ҫеҫ илес терӗмӗр.

Нумай чухне ҫыравҫӑ сӑмахӗсен пӗлтерӗшне контекстсӑр ӑнланма ҫук, ҫавӑнпа шухӑшсен ярӑмӗнче вӗсене аса илъ авторӗсем каланипе ҫыхӑнтарса паратпӑр. Кашни шухӑш текстне ӑҫтан илнине, аса илекенӗн хушамачӗпе кӗнеке страницине кӑтартатпӑр. Шухӑшсене май килнӗ таран хронологипе вырнаҫтарса тухрӑмӑр. Вулакана ӑнланма йывӑр вырӑнсен пӗлтерӗшне тваткӑл хӑлӑпкасем хушшинче кӗске уҫса пытӑмӑр.

- «Леонардо да Винчи питӗ нумай ӗҫленӗ, ҫавӑнпа унӑн ӗҫӗнче ҫитӗнъсем нумай». *(Ф.К. Кузьмин, 174 стр.)*
- «Пушкин вара хастарлӑ ҫын, ӑна гени темелле, Моцарт та гени. Хастарлӑх тӗлӗшӗнчен Пушкин Моцарт еверлӗскер, ӗҫлес енчен, ӗҫченлӗхрен вӑл Сальери пекех питӗ нумай ӗҫленӗ, вӑл питӗ нумай вуланӑ, темиҫе чӗлхе пӗлнӗ. Паллах, ӗҫлемесен, тӑрӑшса вӗренмен пулсан, унӑн пӗлъ ҫителӗклӗ пулас ҫукчӗ, произведенисем те ҫав тери лайӑх, хаклӑ пулас ҫукчӗ», – тесе ӑнлантарса пачӗ пире Константин Васильевич. *(Д.К. Кузьмина, 132 стр.)*
- «Нихҫан та талант, хастарлӑх ҫук тесе ӗҫлеме чарӑнмалла мар. Талант ҫук тесе шухӑшлама юрамасть. Кун пек шухӑшласан, этем нимӗн те тӑваймасть. Чаплӑ художниксем, аслӑ писательсем, изобретательсем, ученӑйсем нихӑҫан та хӑйсен таланчӗ пурри-ҫукки ҫинчен шухӑшламан. Вӗсем ырми-канми ӗҫленӗ, ҫавӑнпа хӑйсен ӗҫӗсене ҫав тери лайӑх туса пынӑ. Ҫитӗнъ тени вӑл, тӑрӑшса ӗҫлесен, хӑех пулать. Вӗсем ӗҫпе чапа тухнӑ. Тем чухлӗ талантлӑ ҫын та ӗҫлемесӗр хӑйӗн талантне кӑтартма пултараймасть. Леонардо да Винчи, чухӑн хресчен ачи пулнӑ пулсан та, яланах тӑрӑшса ӗҫленипе чи чаплӑ художниксенчен пӗри пулса тӑнӑ. Михайло Ломоносов, Ҫурҫӗрти тинӗс хӗрринчен Питӗре ҫитсе чаплӑ поэт та ученӑй шутне кӗнӗ. Ломоносов тӑрӑшса ӗҫлемен пулсан, эпир ӑна халӗ асӑнмалла-и? Ҫукчӗ, асӑнмалла марччӗ, Эпир ун ҫинчен илтес те ҫукчӗ. Унӑн ъкерчӗкӗсем те чаплӑ пулнӑ». *(Д.К. Кузьмина, 132 стр.)*
- 1903 ҫулта поэтӑмӑр Пелепейрен хура хуплашкаллӑ кӗнеке илсе килни паллӑ. Сӑмах кунта Иоганн Вольфганг фон Гете ҫырнӑ «Рейнеке-лис» поэма ҫинчен каласу пырать пулас.] «Ҫак кӗнекене вуласа тухсан, пурнӑҫа питӗ пӗлекен пулан», – терӗ вӑл пире. *(З.Г. Артелина, 142 стр.)*
- «Этеме усӑ сывлӑш тата чунтан-вартан юратнӑ ӗҫ кирлӗ, ҫавсем пурнӑҫ хаваслӑхне параҫҫӗ», – тетчӗ час-часах К.В. Иванов. *(Ф.К. Кузьмин, 173 стр.)*
- «Ют чӗлхене вӗренме тытӑнсан, кашни кунах кӑштах та пулин вӗренсе пырас пулать, пӗр кун та сиктерсе хӑвармалла мар. Кун пек тусан, ют чӗлхе вӗренни сире

хăвăрăн тĕп ĕçĕрте кансĕрлемест, питĕ лайăх результат парать», – тесе ăнлантарчĕ вăл. *(Ф.К. Кузьмин, 176 стр.)*

- Вăл пире: «Анваскăр, ниçта та пушар курăнмасть», – тет. Унтан вăл йăл кулса: «Пушар пулсан та, търех чупмалла мар, малтан пушар сънтермелли хатĕрсене алла тытмалла, унтан тин чупмалла», – тет. *(Ф.К. Кузьмин, 174 стр.)*
- «Пирĕн талантлă çынсем чухăн, пуянсен талант çук, хуçасем пирĕн, пурте пекех, тит титычсем. Вĕсем хăйсен улталамалли хастарлăхне кăна вăйлатса пыраççĕ, шухăшлама та пĕлмеççĕ, – терĕ. – Наукăпа техникăна малалла ярас тĕлĕшпе питĕ нумай тăрăшса вĕренмелле, питĕ нумай пĕлмелле, ырми-канми ĕçлемелле», – тесе хушса хучĕ. *(Ф.К. Кузьмин, 176 стр.)*

К. Иванов хăй те Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче учительте тăрăшнă, вĕренъ кĕнекисене хатĕрленĕ, ачасемпе тĕрлĕ енлĕн ĕçленĕ май вăл вĕсене чылай вĕрентсе калнă сăмахĕсем паянхи кун та актуаллă.

**Усă курнă литература:**


1. Константин Иванова аса илеççĕ / Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. - Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990. - 271 с.
2. Константин Ивановăн илемлĕх тĕнчи тата наци культурисен аталанăвĕ ă Художественный мир Константина Иванова и проблемы развития национальных культур ă Konstantin Ivanovs artistic outlook and the problems of development jf national cultures / [кăлараканӗ С. А. Александров]. - [Шупашкар : и. ç.], 1990. - 15 с. – Чăвашла, вырăсла.
3. Исаев, В. Ф. Силпи асамачĕ : К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май / В. Ф. Исаев. - Шупашкар : КПСС Чăваш обкомĕн изд-ви, 1990. - 60 с.
4. Константин Васильевич Иванов : тĕпчев ĕçĕсем / И. Н. Ульянов яч. Чăв. патш. ун-чĕ ; [В. Г. Родионов пухса хатĕрленĕ]. - Шупашкар : Чăваш университечĕн изд-ви, 2000. - 84 с.
5. Родионов В. Г. К. В. Иванов хайлавĕсен пултарулăхлă историйĕ / В. Г. Родионов ; И. Н. Ульянов яч. Чăв. патш. ун-чĕ. - Шупашкар : Чăваш университечĕн изд-ви, 2000. - 36 с.